26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ДЕКАБРЬ
1
ЮНКУН
237(6474) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Агротехника — тухăçлă тырпул никĕсĕ

Ленин — Сталин партийĕ аталантарнă колхоз стройĕ отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче хăйĕн хăватлă вăйне пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартса пачĕ. «Вăрçăн виççĕмĕш çулĕнче, — тенĕ Сталин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революци пулнăранпа 26 çул тултарни çинчен тунă докладра, — пирĕн çар апат-çимĕç çитменнине туймасть пулсан, халăха апат-çимĕç, промышленноçа чĕртавар парса тăраççĕ пулсан, çакăнта вара колхоз стройĕн вăйĕпе хăвачĕ, колхоз хресченĕсен патриотизмĕ палăрчĕ».

Колхоз хресченĕсем хамăрăн ирĕклĕ çĕршывран фашистла вăрă-хурахсене пĕр çын юлмиччен тасатса çитерме фронтпа çĕршыва мĕн кирлине ытлăн-ситлĕн парса тăрассишĕн вăя шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Кăçалхи ялхуçалăх çулĕнче колхозниксемпе колхозницăсем, малта тăракан агротехникăна пурнăçа кĕртсе пырса, тухăçлă тырпул туса илчĕç. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз, вăтам шутпа, гектартан 100-шер пăт тырă илнĕ. Шăхасан районĕнчи «Заря» колхоз çурхи тулă кашни гектартан 23 центнере яхăн илнĕ. Кун пек примерсене нумай илсе кăтартма пулать. Колхозсем тухăçлă тырпул туса илни государствăна тырă памалли плана срокчен тултарма май пачĕ. Халĕ республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, хăйсен ытлашши тыррине государствăна сутса, тăван çĕршыв хăватне татах та ытларах ÿстерме пулăшаççĕ.

Колхоз хресченĕсем Тăван çĕршыва хÿтĕленĕ çĕрте нихăçан пулман паттăр ĕç турĕç. Вĕсен пархатарлă ĕçне тăван çĕршыв ĕмĕр-ĕмĕр асра тытĕ. Анчах умра татах та пысăкрах задачăсем тăраççĕ. Фронтпа çĕршыв интересĕсем ялхуçалăх продукчĕсем туса хатĕрлессине пĕрмаях ÿстерсе пыма хушаççĕ. Çĕнтерÿ сывăх, анчах ăна алла çавăрса илес тесен, пирĕн çитес 1944-мĕш çулта ялхуçалăх продукчĕсен тухăçлăхне татах та ытларах ÿстермелле. Тухăçлă тырпул туса илессине агротехника ĕçĕсене хĕллехи вăхăтран тытăнсах тĕплĕн пурнăçа кĕртсе пыни, тракторсемпе ялхуçалăх машинисене лайăх юсани, кадрсем кирлĕ таран вĕрентсе хатĕрлени татса парать. Çаксем пулаççĕ те ĕнтĕ колхозлă ял умĕнче тăракан паянхи хĕрÿллĕ задачăсем.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ хĕллехи агротехника ĕçĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе татăклă кăтартусем пачĕç. Пирĕн республикăри колхозсенче выранти удобренисен пуянлăхĕ пысăк. Вĕсемпе усă курни халĕ, вăрçă вăхăтĕнче, нихăçанхинчен те ытларах кирлĕ. Çавăнпа та партипе совет, комсомол организацийĕсен, çĕрĕç органĕсен тата ялти пĕтĕм общественноçăн выранти удобренисене пухас, вĕсене пахса усрас тата вĕсемпе усă курас енĕпе çине тăрса ĕçлемелле.

Выранти удобренисенчен пĕри — тислĕк пулать. Тислĕк пухас плана тултарас тесен, колхозсенче кашни фермăна, лаша витине тислĕк пухса хатĕрлес тĕлĕшпе заданисем памалла, тислĕке палăртнă вырăна куллен турттарса тăмалла. Колхозниксен килĕсенчен тислĕк ытларах пухас тесен, вĕсене вылььăх-чĕрлĕхсем айне сарма улампа торф памалла, тислĕк турттарма лашасем парас пулать. Обществăллă çуртсемпе колхозниксен çурчĕсенче — кĕл, кайăк-кĕшĕк фермисенче кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухассине тата торф кăларса хатĕрлессине хакламанни пулмалла мар. Уйхир бригадисенче кĕл пухас, торф кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен çынсем уйăрмалла. Вĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пымалла.

Выранти удобренисене пухас ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе вĕсене пухнишĕн колхозниксемпе колхозницăсене хушса тÿлени пысăк пулăшу парать. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ тислĕк пухса ăна пăхса усрассине лайăх организациленĕ аслă конюхсене, фермăсен заведующийĕсене çулталăк вĕçлениччен 20-шер ĕçкунĕ хушса пама сĕнеççĕ. Çавăн пекех харпăрхăй килĕнчен тислĕк паракан колхозниксене кашни тонна тислĕкшĕн 2—3-шер ĕçкунĕ пама юрать. Кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухакансене те ĕçкунĕ хушса тÿлеççĕ. Партипе совет организацийĕсен çавăн çинчен колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Кăçал кĕркунне çăмăр сахал çурĕ. Çавăнпа та пирĕн тăпрара нÿрлĕх кирлĕ таран тытса хăварас тесен, юр тытассине анлăн организацилемелле. Уйрăмăнах кĕрхи тырăсемпе нумай çул хушши ÿсекен курăксем акнă тата килес çуркунне çуртырисем акмалли çÿллĕ вырăнсене юр ытларах тытса хăвармалла.

Мĕн акатăн çавă шăтать, тенĕ ваттисем. Ку пурнăçран тухнă сăмах. Начар пахалăхлă вăрлăхсем акни тырпулсен тухăçлăхне чакарать. Çавăнпа та кашни колхозăн мĕн акма кирлĕ таранах лайăх пахалăхлă вăрлăхсем хатĕрлемелле. Вăрлăхсене тасатса сортлас ĕçе çĕнĕ çултан кая юлмасăр вĕçлемелле. Партипе совет организацийĕсен колхозсенче вăрлăхсем хатĕрлесси мĕнле пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла.

Çитес çулта тухăçлă тырпул туса илес задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртесси колхозниксемпе колхозницăсене агротехникăна вĕрентнинчен тата пултарулла кадрсем кирлĕ таран хатĕрленинчен нумай килет. Хĕллехи вăхăт колхозлă ялăн хĕрÿллĕ вĕренÿ тапхăрĕ пулмалла. Вĕренĕве колхозсенчи ертсе пыракан работниксене кăна мар, мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене явăçтармалла. Вĕренĕве организацилес тĕлĕшпе пирĕн пуян опытсем пур. Апла пулсан, тимлĕн ĕçлеме тытăнни çеç кирлĕ. Çĕр ĕç работникĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсен тивĕçĕ — вĕренĕве, колхозниксем мĕнле ĕçре пулнине шута илнĕ тăрăх, анлăн организацилесси пулать.

Колхоз хресченĕсем, аслă çулпуç Сталин юлташ çĕнтерÿ тума çĕнĕрен ытларах вăй хурса ĕçлеме чĕннине ответлесе, çитес çулхи тухăçлă тырпулшăн кĕрешĕве тухаççĕ. Партипе совет организацийĕсен, колхозниксен патриотла çĕкленĕвне вăйлатса пырса, агротехника ĕçĕсене пĕтĕмпех пурнăçа кĕртмелле тăвас пулать.

«Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче хĕллехи агротехника ĕçĕсене туса ирттермелли план çинчен» Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановление колхозниксемпе колхозницăсене тĕплĕн ăнлантарса парса, вĕсене вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешĕве анлăн мобилизацилемелле.

Агротехника-тухăçлă тырпул никĕсĕ. Агротехника ĕçĕсене чыслăн пурнăçласа, çитес çулта татах та тухăçларах тырпул туса илер!

СЫВĂ ПУЛТĂР ТĂВАНЛА ЧĂВАШ ХАЛĂХĔ!

Чăваш республикин делегацийĕ литовецсен подразделенийĕсенче

Чăваш республикинчен килнĕ делегатсене пирĕн подразделенисенче ăшшăн кĕтсе илчĕç.

Пирĕн чаçа шефа илнĕ Чăваш республикинчен килнĕ делегатсене — А. Кудашов, А. Фадеева, А. Юхтанова, И. Жуков юлташсене Литва ССР Совнаркомĕпе Литвари Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕн представителĕ Б. Моркунас юлташ ертсе пырать. Вĕсем Хĕрлĕ Çарăн воинĕсене — литовецсене хăйсен ĕçĕнчи ÿсĕмсем çинчен, чăваш халăхĕ фронта пулăшас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен каласа пачĕç.

Çакăнпа пĕрлех хăнасем пирĕн боецсемпе командирсене тăванла Чăваш республикинчи ĕççыннисем Октябрь уявĕ ячĕпе хатĕрленĕ парнесене илсе килчĕç.

Делегаци килнĕ ятпа пулса иртнĕ митингра пирĕн подразделенисенчи боецсемпе офицерсен ячĕпе Хрусталев, Гордеев, Гинтаутас, Мелинис тата ытти юлташсем тухса каларĕç, вĕсем хăнасене парнешĕн тав турĕç, ылханлă тăшмана малашне татах та вăйлăнрах çĕмĕрсе пыма шантарчĕç.

Çак митинг Чăваш республикинчи ĕççыннисемпе Литва халăхĕн Хĕрлĕ Çар ретĕнчи ывăлĕсем хушшинчи çыхăнупа туслăха татах та çирĕпленнине кăтартса пачĕ

Чăваш республикинчен делегаци килни çине ответлесе, Хĕрлĕ Çар подразделенийĕсенчи литовецсем тăшмана татах та вăйлăнрах пĕтерсе пыма, гитлерла вăрă-хурахсене çĕмĕрсе тăкмалли сехете çывхартассишĕн çине тăрса кĕрешме пулчĕç.

А. СЕНИН.

(«Родина зовет» хаçатран).

Фронт умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçлар!

Государствăна сутнă тырра декабрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр хатĕрлев пункчĕсене леçсе парар!

Лав хыççăн лав!

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). Районри колхозниксемпе колхозницăсем, вăй-хала шеллемесĕр ĕçлесе, кăçал тухăçлă тырпул туса илчĕç. Государствăна тырă памалли плана срокчен пурнăçларĕç. Халĕ вĕсем ытлашши тырра государствăна сутаççĕ.

Ухманти «Победа» колхоз колхозникĕсем 3.000 пăт, «Заря» колхоз членĕсем 4.000 пăт сутма пулчĕç. Вĕсем сутнă тырра васкасах хатĕрлев пункчĕсене турттараççĕ. Икĕ кун хушшинче «Победа» колхоз 732 пăт ытла, Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхоз 400 пăт, «Красное Сормово» колхоз 390 пăт, «Заря» колхоз 600 пăта яхăн кайса леçрĕç.

МТС-ри паллă тракторист-стахановец, коммунист Антон Емельянов кăçал тракторпа ĕçлемелли плана 180 процент тултарса 1250 килограмм горючи перекетленĕ. Вăл государствăна 20 пăт тырă сутрĕ.

— Çĕнтерĕве çывхартас тесе государствăна тырă сутатăп, — тет вăл.

Çавăн пекех Сидоров, Александров, Григорьев, Тимофеева трактористсем те хăйсем перекетлесе хăварнă тырра çирĕмшер пăт государствăна сутрĕç, çийĕнчех хатерлев пунктне кайса леçрĕç.

Отечественнăй вăрçă инвалидĕ — Ешкильтри «Большевик» колхоз счетоводĕ Харитонов юлташ 5 пăт тырă сутрĕ.

— Эпĕ çулталăка яхăн фронтра çапăçрăм. Гитлерла захватчиксем пирĕн совет çĕршывне тискеррĕн çаратнине, пирĕн мирлĕ халăха тискер кайăк пек асап та хĕн-хур кăтартнисене хам куçпа куртăм. Нимĕçсем — этемсем мар, вĕсем — çынçиенсем, тискер кайăкран та хăрушăрах çĕленсем. Эпĕ, çĕнтерĕве çывхартас тесе, хам перекетлесе хăварнă 5 пăт тырра пĕтĕмĕшпех государствăна сутатăп, — терĕ вăл.

Ăна кура вара ыттисем те государствăна 15—20-шер пăт тырă сутма пулчĕç.

Государствăна тырă сутас ĕç колхозсем хушшинче, çавăн пекех колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче те сарăлнăçемĕн сарăлса пырать. Районри колхозсенчен тырăпа хатĕрлев пункчĕсене лав хыççăн лав каяççĕ.

Степан АСЛАН.

Агитациллĕ — ăнлантаруллă ĕç начар пынă пирки

Çак кунсенче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ государствăна тырă сутас ĕç Шупашкар тата Ишлей районĕсенче мĕнле пынине сÿтсе-яврĕ. Çак ĕçе вăрахăн туса пынăшăн ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ асăннă районсен руководителĕсене хытăн ятласа хăварчĕ.

Парти Обкомĕн бюровĕ ВКП(б) райкомĕсене колхозниксем хушшинче массăлла-политикăлла ĕçе организацилеме, мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене государствăна тырă сутас ĕçе активлăн хутшăнтарма хушрĕ.

Комсомольски районри Кивĕ Мурат ялсоветне кĕрекен «Красный Восток» колхозра ку ĕç йĕркеллĕ пулса пымасть. Çакă вăл колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче агитациллĕ-ăнлантарулла ĕçе кирлĕ вырăна лартманнинчен килет. Ялсовет председателĕ Абросимова тата ВКП(б) райкомĕн уполномоченнăйĕ Попов юлташсем колхозниксемпе колхозницăсене çак ĕçе мобилизацилес вырăнне, колхозниксен пухăвĕнче пачах урăхла ыйту çине куçса кайнă. Агитаторсем ялти массăна çак ĕç çинчен ăнлантарса памаççĕ. Çакна пула та ĕнтĕ ку колхозра ытлашши тырра государствăна сутас ĕç начар пулса пырать. Ноябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне хатĕрлев пунктне нимĕн чухлĕ те тырă леçмен. Ку колхоз районра вăйлă колхозсен хисепĕнче тăрать. Колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче ăнлантарулла ĕçе кирлĕ пек йĕркеленĕ пулсан, ку ĕç, паллах, организованно иртме пултарнă.

Комсомольски районра паянхи кун тĕлне государствăна 89 пин пăт тырă сутнă, анчах хатĕрлев пунктне 17 пин пăта яхăн çеç леçсе панă. «Искра» колхоз (председателĕ Квасов) членĕсем 7 пин пăт сутма йышăннă, хатĕрлев пунктне 1 пин пăт кăна леçсе панă. Çавăн пекех «Красный Октябрь» колхозра 4 пин пăт сутма йышăннă пулсан, хатĕрлев пунктне 500 пăт çеç леçнĕ.

Районри колхозсенче çак ĕç япăх пулса пыни район руководителĕсем ун çине большевикла çавăрăнса пăхманнинчен килет. Районри партипе совет активне ку ĕçе мобилизацилемен. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çак ыйтупа йышăннă решенисем Комсомольски районшăн та урок пулса тăмалла.

Сутма йышăннипех лăпланса лармалла мар

КУСЛАВККА. Çĕршывпа фронт умĕнчи тивĕçе ăнланса илнĕ колхозниксемпе колхозницăсем государствăна сутнă тырра çийĕнчех хатĕрлев пункчĕсене леçеççĕ. «Коммунист» колхоз членĕсем (вăл колхоз пысăк мар) государствăна 600 пăт тырă сутма йышăннă. Вĕсем сутнă тырра çийĕнчех тата пĕтĕмĕшпех хатĕрлев пунктне леçсе пачĕç. «Динамо», «Правда» колхоз членĕсем те сутма йышăннă тырра çуррине ытла хатĕрлев пункчĕсене леçсе пачĕç. Районĕпе ноябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне государствăна 51.709 пăт тырă сутнă, хатĕрлев пунктне 23.324 пăт леçнĕ. Сутнă тырра хатĕрлев пункчĕсене леçсе парасси районра çителĕксĕр пырать-ха. Хăшпĕр колхоз руководителĕсем ку ĕç сÿрĕк-пынине транспорт çителĕксĕрри çине йăвантараççĕ. Ку пачах та тĕрĕс мар. Халĕ колхозсенче государствăна сутнă тырра хăвăртрах хатĕрлев пункчĕсене леçсе пама пур майсем те çителĕклĕ. Ку енĕпе тăрăшса ĕçлени кăна кирлĕ.

Г. КРЮЧКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Хĕрлĕ Чутай районĕнче васкамаççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. (Телефонпа). ВКП(б) Обкомĕ, Хĕрлĕ Чутай районĕнче государствăна тырă сутас ĕç çителĕксĕр пынине палăртса, тырă сутас тата сутнă тырра хатĕрлев пунктне леçес ĕçе декабрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр туса çитерме хушрĕ. Районри чылай колхозсем Обком кăтартăвне пурнăçа кĕртессишĕн тимлĕн ĕçлеме тытăнчĕç. «Агроном», «Коминтерн», «Правда» тата ытти чылай колхозсем государствăна сутнă тырра хатĕрлев пунктне леçме васкаççĕ.

Анчах ита, пĕтĕмĕшпе илсен, районра государствăна тырă сутасси çаплах çителĕксĕр пулса пырать-ха. Уйрăмăнах сутнă тырра леçесси кая юлать. Паянхи куна государствăна сутнă 45.000 пăт тырăран 10.000 пăтне кăна хатĕрлев пункчĕсене леçнĕ. Хăшпĕр колхозсенче паян кунччен те тырă сутас ĕçе пуçарман. Çапла, «Прогресс» колхоз (председателĕ Емшаков), «Красные Тоганаши» колхоз (председателĕ коммунист Курюков) государствăна тырă пачах та сутман. Ун пек колхозсем вуннăран та иртеççĕ. Колхоз руководителĕсем тата ялти актив колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче массăлла-ăнлантару ĕçне тивĕçлипе организациленĕ пулсан, паллах, ĕç ун пек вăрахăн пымалла мар.

ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн государствăна тырă сутассине хăвăртлатма татăклă мерăсем йышăнмалла. Тырă сутас ĕçе хутшăнмасăр пĕр колхоз та ан юлтăр.

Пĕтĕм вăя — çĕнтерÿ тума

ЙЕПРЕÇ. Районри колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çарăн чаплă çитĕнĕвĕсем çине фронта пулăшас ĕçе вăйлатнипе ответлеççĕ. Крупская ячĕпе тăракан колхоз государствăна 10.050 пăт тырă сутрĕ. Çавăн пекех «Большевик», «Тымар», «Ударник» колхоз членĕсем те государствăна пиншер пăт тырă сутрĕç.

ЭЛĔК. Сорăмпуç колхозĕнче государствăна тырă сутас ыйтупа пуху пулса иртрĕ. Нумай колхозниксем государствăна тырă сутма кăмăл турĕç. Бригадир Филиппов юлташ — 15 пăт, Н. Михайлов — 20 пăт, А. Михайлов — 17 пăт сутрĕç. Пĕр кун хушшинче кăна колхозниксем государствăна 960 пăт тырă кайса сутрĕç.

☆ ☆ ☆

КИРОВ ЯЧĔ КĔРЕШÿРЕ ХАВАСЛАНТАРАТЬ

Тăхăр çул каярах, 1934 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнче, Сергей Миронович Кировăн хĕрÿллĕ пурнăçĕ татăлчĕ. Троцкистла-бухаринла бандитсем, фашистла разведкăн агенчĕсем, чи тискер вăрă-хурахсем пек, кĕтесрен персе, Ленин—Сталин партийĕн шанчăклă ывăлне, халăхăн çуламлă трибунне, Сталин юлташăн чи çывăх тусĕпе соратникне С. М. Кирова вĕлерчĕç. Тăшмансем, çав вăрă-хурахла ĕçе туса, пирĕн ретсене аркатса яма шутланă. Анчах вĕсем йăнăшрĕç. Пирĕн партипе халăх хамăрăн çĕршывра фашистла агентурăн йăвисене, «пиллĕкмĕш колоннăна» çапса аркатрĕç. Киров совет халăхĕн чĕринче ĕмĕрлĕхех чĕрĕ юлчĕ.

Сергей Миронович хăйĕн нихăçан сÿнми çулăмпа ялкăшса тăракан пултарулăхĕпе талантне вĕсне çитиччен халăха, унăн аслă ĕçне панă. Профессионал-революционер, вăл мĕн çамрăкранах большевиксен партийĕн ĕçĕнче ÿскĕ. Патша тĕрми те, ссылкăсем те, унăн хурçă пек çирĕп вăй-хăватне хуçайман.

Революцин малтанхи çулĕсенче С. М. Киров Çурçĕр Кавказри халăхсене большевиксен партийĕ тавра пĕтĕçтерет, вĕсене совет влаçĕшĕн кĕрешме ертсе каять. Граждан вăрçи çулĕсенче Сергей Миронович Астрахане шурă банлăсенчен хÿтĕлес ĕçе ертсе пырать, Деникина çапса аркатнă çĕрте совет воинĕсене хавхалантарса пырать, Çурçĕр Кавказра, Бакура совет влаçне ура çине тăрат ать. Вăл çапăçу хирĕнче чăн-чăн полководец талантне кăтартса парать.

Хĕвеллĕ Бакура ĕçлесе, вăл халăхсен туслăхне çирĕплетсе пынă, халăх хуçалăхне, нефть кăларас ĕçе юсас тĕлĕшпе чунне парса ĕçленĕ.

Кавказри хĕрÿллĕ ĕçсем хыççăн вăл Ленин хулинче троцкистла-зиновьевла оппозиципе кĕрешет, халăх интересĕсене сутакан ирсĕрсене пĕр хĕрхенмесĕр çапса аркатать.

Ленинград хулипе Ленинград облаçĕнчи промышленноçа аталантарас, çак аслă хулан оборонине тĕреклетес тĕлĕшпе туса ирттернĕ аслă ĕçсем Киров ячĕпе çыхăнса тăраççĕ.

Халĕ, хамăр тăван çĕршыва, аслă Ленин хулине нимĕçсен фашистла бандисенчен хÿтĕленĕ кунсенче, Киров ячĕ Хĕрлĕ Çар воинĕсене, мĕнпур халăха хамăрăн совет çĕрне нимĕç оккупанчĕсенчен хăвăртрах тасатассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешме хавхалантарса пырать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 29-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 29-мĕшĕнче СОЖ шывĕпе ДНЕПР шывĕ хушшинче, ГОМЕЛЬ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, халăх пурăнакан 40 пункта ытла тытса илнĕ, вĕсем хушшинче — ЧАМЫШЕЛЬ, НОРКОВЩИНА, ДУБОВИЦА, ВЕТВИЦА, ПРИЧАЛЕСНЯ, ДЕРБИЧИ, ГАВЛИ, НАСПА, ЯСНАЯ ПОЛЯНА, ЕЛЕНЕЦ, КЛЕНОВИЦА, СМЫЧОК ятлă пысăк пунктсене.

ДНЕПР шывĕпе БЕРЕЗИНА шывĕ хушшинче, ЖЛОБИНРАН кăнтăртарахра, пирĕн çарсем çапăçса малалла куçнă, ШИХОВО, СТРЕШИН, ЛИПЫ, МАРС, ПЕРВОМАЙСКИЙ, КОСАКОВКА, ЛЯДЫ, ЗАБРОДЬЕ ятлă халăх пурăнакан пунктсене тытса илнĕ.

ПРИПЯТЬ шывĕн анат тăрăхĕнчи районра пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, унăн оборонин вăйлă çирĕплетнĕ темиçе пунктне тытса илнĕ.

КОРОСТЕНЬ, ЧЕРНЯХОВ тата БРУСИЛОВ районĕнче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене сире-сире янă.

ЧЕРКАССЫ районĕнче пирĕн çарсем ДНЕПР шывĕн сылтăм енчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă, тăшманран вăйлă çирĕплетнĕ РУССКАЯ ПОЛЯНА, ДУБИЕВКА, БРОДЫ, КИРИЛЛОВКА, ЧЕРНОВКА ятлă пунктсене тытса илнĕ.

КРЕМЕНЧУГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене сире-сире ярса, малалла талăнса пынă, тăшманăн çирĕплетнĕ темиçе пунктне тытса илнĕ.

ДНЕПР шывĕн кукринче, ДНЕПРОПЕТРОВСКРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем хаяррăн çапăçнă хыççăн тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ пункчĕсене — МИХАЙЛОВКА, БУТОВИЧЕВА, ВОДЯНЫЙ, КРАСНЫЙ ЯР, ГРИГОРЬЕВКА, ЛИКНЕП, ТРАКТОРНЫЙ, НИКОЛАЙ-ПОЛЕ, НОВО-ВОЗНЕСЕНСКИЙ, ПЕТРОПОЛЬ, МНОГОТРУДНЫЙ, НОВО-АВГУСТИНОВКА, НОВО-АЛЕКСАНДРОВКА ятлă пунктсене тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Ноябрĕн 28-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 104 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çÿлелле перекен артиллери тăшманăн 47 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Гомель хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, малалла куçнă, халăх пурăнакан 40 пункта ытла тытса илнĕ. Нимĕçсем малтанах çирĕплетсе хунă пунктсемпе усă курса, совет çарĕсене наступлени тума чарма хăтланаççĕ. Пĕр соединени боецĕсем паян тăшманăн çирĕплетнĕ темиçе пунктĕнчи гарнизонĕсене çавăрса илнĕ те пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 800 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Темиçе артиллери батарейине, минометсен темиçе батарейине, автоматсемпе винтовкăсем нумай тата боеприпассен

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 29-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

2 складне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Халăх пурăнакан пĕр пунктра гитлеровецсен пĕр роти хăйсен командирĕпе пĕрле тыткăна парăннă.

* * *

Припять шывĕн анат тăрăхĕнчи районра пирĕн çарсем тăшманăн çирĕплетнĕ темиçе пунктне тытса илнĕ. Пĕр соединени чаçĕсем гитлеровецсене пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ, тăшманăн 4 артиллери батарейине тата бронемашинине пĕтерсе тăкнă, вырăнти халăхран çаратса пухнă тырра тиенĕ 100 лава ытла, 200 лаша тата хĕçпăшалсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Черняховпа Брусилов районĕнче тăшманăн мотопехотипе танкĕсем çаплах атакăсем тунă. Пирĕн çарсем гитлеровецсен атакисене сире-сире янă, вĕсене пысăк çухатусем тÿстернĕ. Нимĕçсен 26 танкне, хăй тĕллĕн çÿрекен 9 туппине тата 2 бронетранспортерне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 900 вилли тăран выртса юлнă.

Пирĕн летчиксем тăшманăн çапăçу речĕсене пыра-пыра çапнă, нимĕçсен 30 танкне çити, 200 автомашинине тата 10 бронетранспортерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Черкассы районĕнче, Днепр шывĕн сылтăм енче, пирĕн çарсем нимĕçсене вăйлă çирĕплетнĕ Русская Поляна тата Дубиевка ятлă пунктсенчен хăваласа кăларнă. Малалла ăнăçу туса пырса, пирĕн боецсем Броды, Кирилловка, Терновка ятлă халăх пурăнакан пунктсене тытса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче 1.500 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 17 танкне, 3 бронемашинине тата хăй тĕллĕн çÿрекен 3 туппине çунтарса янă. Тăшмантан 150 миллиметрлă гаубицăсен батарейине тата ытти тĕрлĕ тупăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Кременчугран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем лайăх маневр тунă та тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ пунктне тытса илнĕ. Çав пунктшăн çапăçнă чухне нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсем, контратака туса, çав пункта каялла туртса илме хăтланнă, анчах та вĕсене каялла хăваласа янă, нимĕçсене çĕнĕрен чылай пысăк çухату тÿстернĕ.

* * *

Днепр шывĕн кукринче, Днепропетровскран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем хаярран çапăçнă хыççăн халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Çав çапăçусенче нимĕçсен 11 танкне, 20 туппине, 19 минометне, 40 автомашинине çити тата 2 автоцистернине пĕтерсе тăкнă. Тăшман сынсем тĕлĕшпе пысăк çухату тÿснĕ.

Пирĕн авиаци пĕр çĕре пухăнса тăнă нимĕç çарĕсем çине тата çар эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула пушарсем нумай тухнă, пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă. Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем кун каçа нимĕçсен 34 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Баренц тинĕсĕнче нимĕçсен 10.000 тонна таякан суднине шыва путарнă. Кунсăр пуçне, 3.000 тонна таякан миннăй заградительне, 800 тонна таякан тральщикне тата хуралта çÿрекен катерне путарнă.

* * *

Минск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ ноябрĕн 5-мĕшĕнче нимĕçсен карательнăй экспедицине аркатса тăкнă. Партизансем тăшманăн 100 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, 20 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Ноябрĕн 18-мĕшĕнче тăшман тепĕр хут партизансене çавăрса илме хăтланнă. Совет патриочĕсем нимĕçсене сывăха янă та вĕсене пăшалсемпе, пулеметсемпе пеме пуçланă. Темиçе вунă гитлеровеца вĕлернĕ. Нимĕçсенчен 6 пулемет тата патронсем тиенĕ 10 лав тытса илнĕ.

* * *

Нимĕç захватчикĕсем оккупациленĕ совет хулисемпе ялĕсенчен çакăн пек хыпарсем килеççĕ: Хĕрлĕ Çар хĕвеланăçнелле куçса пынă пирки нимĕç влаçĕсем хăйсем совет çĕрĕнче тунă тискер ĕçсен йĕрĕсене шăлса лартма хăтланаççĕ. Çапла, Сăмахран, Себеж районĕнче нимĕçсем хăйсем персе вĕлернĕ мирлĕ граждансен виллисене чавса кăларттарнă. Çав вилĕсене чавса кăларса çунтарса янă хыççăн нимĕçсем вăл шăтăксене чавнă çĕрте пулнă совет çыннисене пурне те персе вĕлернĕ. Çавăн пекех тата çакăн пек хыпар килнĕ: Бобруйск таврашĕнче нимĕçсем оккупаци вăхăтĕнче фашистла ирсĕрсем асаплантарса тата персе вĕлернĕ совет гражданĕсен йышлă виллисене чава-чава кăлараççĕ. Ятарласа тунă командăсем шăтăксемпе канавсене чавса, унтан çын виллисене туртса кăлараççĕ те вĕсене бензин сапса çунтарса яраççĕ. Гитлерла çынçиенсем, çапла туса, хăйсем тунă çав тери тискер ĕçсен йĕрĕсене пĕтерсе лартма шутлаççĕ курăнать. Анчах нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Бобруйскра, Себежра тата хăйсем вăхăтлăха оккупациленĕ ытти совет районĕсенче мĕн-мĕн тунине совет халăхĕ лайăх пĕлет. Гитлеровецсем хăйсен мĕнпур преступленийĕсемшĕн ответ тытасран пăрăнса юлаймĕç.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: пирĕн мухтавлă земляк Совет Союзĕн Геройĕ гварди лейтенанчĕ танкист С. В. КОНОВАЛОВ юлташ.

НИМĔÇ ТАРАТЬ

(Çапăçу хирĕнчен килнĕ çыру)

Юратнă тăвансем! Эпир, отечественнăй вăрçăн пĕр фронтĕнчи Сирĕн ывăлăрсем — артиллеристсем, Сирĕн çырăвăра илсе вуларăмăр. Вăл пире çак хĕрÿ кунсенче татах та пысăк çитĕнÿсем патне чĕнет, вăл пире хĕрÿллĕнрех кĕрешме хушать.

Эпир хамăр çапăçакан фронтра нимĕç йыттисене артиллери вучĕпе лармa-тăма та памастпăр. Нимĕç тарать. Вăл халь пирĕн вăя туйрĕ, анчах та çаплипех хирĕç тăма тапаçланать-ха.

Çук, тем пек тапаçлансан та ĕçĕ тухмĕ! Эпир вăйлăн вăрçатпăр. Пирĕн фронтра нимĕç пĕр сехет те ырран пурăнаймасть. Эпир вĕсене е вĕлеретпĕр, е амантса пĕтеретпĕр, е тыткăна илетпĕр.

Пирĕн чаçа Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ хăйĕн приказĕпе тав турĕ, «Духовщинскийсем» тесе ят пачĕ. Тăван çĕршывăн столици—Мускав пирĕн çĕнтерÿшĕн 124 орудирен 12 хутчен пĕр харăс персе салют пачĕ.

Çав салют Сирĕн пата та çитрĕ, тăван Шупашкар ăна уявларĕ. Эпир ăна чухлатпăр.

Шанăр, кĕçех çĕнтерĕпĕр, тăван çĕре тăшманран тасататпăр. Нимĕç халь пуç çавăрнакан сурăх пекех, вăл пиртен тарать. Çĕнтерÿ çывăх, ăна çапăçса хамăр алла илĕр!

Эпир халь малалла шăватпăр, çĕнĕрен те çĕнĕ ялсемпе хуласене нимĕç пусмăрçисенчен хăтаратпăр. Ирĕке кăларнă халăхсем пире хавассăн кĕтсе илеççĕ. Эпир хамăр тăвакан çитĕнÿсенче тыл пулăшăвне систепĕр. Анчах эсир, тăван землякçем, пире татах та вăйлăнрах пулăшса тăрăр. Сирĕн ĕçпе пирĕн ĕç пĕрлешсе пĕр вăй пулĕç, çав вăй Гитлерпа унăн тискер йыт-кĕтĕвне хăвăртрах çĕмĕрсе тăкĕ.

Н-ски чаçри чăваш ывăлĕсем— артиллеристсем: Кĕçĕн лейтенант А. Л. ЛАРИОНОВ, кĕçĕн сержант АНИСИМОВ, рядовойсем П. А. ЯЖЕЙКИН, И. Г. ГЕРАСИМОВ, И. П. ЧИРКОВ, М. А. ЮМАНОВ, Т. А. АЛЕКСАНДРОВ, А. В. ВОРОНКОВ

59951-мĕш полевая почта, «Ф» литер.

КАШНИ ГЕКТАРТАН ÇĔРШЕР ПĂТ ТЫРĂ ТУСА ИЛЕССИШĔН

КАЛИНИНО, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). Мăн Явăшри Александр Емельянов коммунист ертсе пыракан Ленин ячĕпе тăракан колхозра парти организацийĕ çук. Кунта пĕтĕм ĕçе комсомолецсем ертсе пыраççĕ. Комсомол организацинче (секретарĕ Н. Кошкин) 12 комсомолец. Вĕсем пурте хастарлă агитаторсем пулса тăраççĕ. Колхозниксем Сталин юлташăн докладне пĕтĕм чĕререн ырласа йышăнчĕç. Çавăнпа вĕсем нимĕç захватчикĕсене хамăрăн çĕршывран хăваласа кăларма Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа пулăшаççĕ. Çак кунсенче колхозниксем хăйсен перекетленĕ тыррине 10.000 пăт государствăна сутрĕç. Комсомолецсем ку ĕçре тивĕçлине ертсе пычĕç. Колхозра çак ыйтупа ятарласа стена хаçачĕ тухрĕ. Кунсеренех çĕнĕ хаçатсем вуласа параççĕ.

Халĕ колхозниксем килес çул гектар пуçне çĕршер пăт тырă туса илессишĕн социализмлă ăмăрту пуçарчĕç. Бригадăсенче çуракине хатĕрленесси хĕрÿллĕн пулса пырать. Вĕсем пурте вăрлăх тата страховой фондсене хывса çитерчĕ. Вăрлăхсене тасатса кондицие лартассишĕн колхозра халĕ 2 сортировка, триер, пĕр чарăнмасăр ĕçлеççĕ. Кашни бригада декабрĕн 1-мĕшĕччен вăрлăхсене хатĕрлесе çитерет. ВКП(б) членĕн кандидачĕн Литина юлташăн бригади кунсерен 145 центнер тырă сортлас вырăнне 165-шер центнер сортлать. Федорова тата Владимиров комсомолецсем ертсе пыракан бригадăсем уя кунне 120-шер лав тислĕк кăлараççĕ. Халĕ пур 2.500 лав кăларнă та ĕнтĕ, 40 центнер кĕл пухнă. Колхоз тимĕрçи Степанов çак кунсенче плугсемпе сÿресене юсаса пĕтерет.

Б. ШОРНИКОВ.

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн

ОКТЯБРЬСКОЕ. Ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн районри чылай колхозсем çуракине хатĕрленме тытăнчĕç. Ентри-Базарĕнчи «Новая жизнь» колхозра кăçал пур колхозниксемпе колхозницăсем те ĕç кунĕн минимумне тултарнă. Халĕ вĕсем вăрлăхсем сортлас, ялхуçалăх инвентарĕсене юсаса хатĕрлес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ. Ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех пĕр çĕре пуçтарса лартнă. Паянхи кунччен 9 плуг, 6 сÿре юсанă. Ку ĕçре бригадир С. Константинов юлташ паха тĕслĕхсем кăтартать.

Вăрлăхсене сортлас тĕлĕшпе ĕçлеме 5 колхозникрен звено организациленĕ. Вăл çак кунсенчех вăрлăхсене иккĕмĕш хут триерпа сортласа пĕтерет.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçа кĕртнĕ хыççăн 1944 çулшăн аш-какай тата ытти ялхуçалăх продукчĕсене пама тытăнчĕ.

А. ХАТАЕВСКИЙ.

Çулталăкри плана тултарнă

Республикăри промысла кооперацийĕн артелĕсенчен нумайĕшĕсем, социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çулталăкри плана Сталинла Конституци кунĕ тĕлне тултарма пулнă. Халь чылай артельсем хăйсен обязательствине ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Элĕк районĕнчи «Самолет» артель 1943-мĕш çулхи плана 163,3 процент, Ишлей районĕнчи «18-ый партсъезд» артель—135 процент, Куславкка районĕнчи «Прогресс» артель—109 процент тултарнă. Йĕпреç районĕнчи «Красный строитель» артель тăмран чÿлмексем тăвас тĕлĕшпе çулталăкри плана 10 уйăх хушшинче тултарнă. Нумай артельсем плана тултарасси патне çывхарса пыраççĕ.

Халĕ промысла артелĕсенче ĕçлекенсем, Сталин юлташ тата ытларах вăй хурса ĕçлеме чĕннине ответлесе, ĕç тухăçлăхне кунран кун ÿстерсе пыраççĕ.

С. ФЕДОРОВ.

Электростанци строительствинче

Шупашкарти электростанци строительствин коллективĕшĕн ноябрь уйăхĕ нумай рабочисемпе работницăсем çĕнĕ ÿсĕмсем тунипе паллă пулса тăрать. Сталин юлташăн Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă докладне участоксемпе бригадăсенче ăнлантарса панă хыççăн рабочисем çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Нумайĕшĕсем хăйсен обязательствине ăнăçлăн пурнăçа кĕртеççĕ.

Строительствăри Дзюба, Левишев, Чекин юлташсем ертсе пыракан бригадăсем хăйсен планне кулленех 150 процент ытларах тултараççĕ. Кун пек бригадăсем вуннăран та иртеççĕ. Рабочисемпе работницăсен стахановла ĕçĕ чылай ответлă ĕçсене срокчен пурнăçа кĕртме май пачĕ. Пăс парса тăракан хурансене тĕрĕслес ĕçе икĕ кун малтан вĕçленĕ, топливо парса тăмалли механизмсене вырнаçтарасси те ăнăçлăн пырать. Хулана электроэнерги памалли линие тата Атăл урлă кабель хывас ĕçсене вĕçленĕ. Çак кунсенчех водопровод туса пĕтереççĕ.

Халĕ хурансене тата ытти механизмсене вырнаçтараççĕ. Анчах та ку ĕçсене пурнăçа кĕртесси вăрахăн пырать. Çирĕплетмелли материалсем çителĕклĕ пулманни чылай чăрмав кÿрет. Якунин юлташ (главнăй инженер пулса ĕçлекен завод руководителĕсем электростанци валли тумалли ĕçсене вăхăтра пурнăçа кĕртмеççĕ. Ку тĕлĕшпе Канашри вагонсем юсакан завод та çителĕксĕр ĕçлет. Чугунçул линийĕ тăвасси ĕç вăйĕ кирлĕ таран пулман пирки юлса пырать. Калинино, Вăрмар, Куславкка тата Çĕрпÿ районĕсем ку тарана çитсе те чугун çул строительствинче ĕçлеме ĕç вăйĕ çителĕклĕ паман.

К. РОМАНОВ.

Совет Союзне Колумби посланникĕ А. Мичельсен господин килни

Ноябрĕн 29-мĕшĕнче Мускава Колумбин Совет Союзĕнчи чрезвычайнăй посланникĕ тата полномочнăй министрĕ А. Мичельсен господин килнĕ.

Аэродромра А. Мичельсен господина Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Америкăри çĕршывсен отделĕн заведующийĕн заместителĕ Д. С. Чувахин юлташ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Протоколсен отделĕн представителĕ П. А. Бушуев юлташ кĕтсе илнĕ.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВАРÇА ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: 8-мĕш армири акăлчансен, индиецсен тата новозеландецсен чаçĕсем тăшманăн Сангро шывĕ çинчи кĕпер умĕнчи укрепленисенчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре выртакан вăйлă позицийĕсене атакăланă. Нимĕçсем темиçе хутчен те контратакăсем тунă пулин те, союзниксен çарĕсем малалла куçнă. Хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Авиаци çĕр çинче çапăçакан çарсене ăнăçлăн пулăшса пырать.

Американецсен 5-мĕш армийĕн патрулĕсем активлăн çапăçнă.

Çурçĕр Африкăри сывлăш-çар вăйĕсен йывăр бомбардировщикĕсем ноябрĕн 28-мĕшĕнче Триест хулинчен çурçĕртерехри Доньере чугун çул кĕперĕпе туннеле атакăланă. Вăтам бомбардировщиксем тăшманăн Югославири (Дубровник, Зара тата Шибеник порчĕсене тата унти суднисене атакăланă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: ноябрĕн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле авиацин бомбардировочнăй самолечĕсем Хĕвеланăç Германири чылай объектсене атакăланă.

БЕРЛИН ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНĂ ХЫÇÇĂН

ЛОНДОН, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Цюрихри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Цюриха Берлинран килнĕ çынсем çапла каласа панă: Германи столицине халь паллама та çук. Çĕмĕрĕлмен чÿречеллĕ çурт пĕтĕм Берлинĕпе те çук. Çынсене çăлас ĕç хăшпĕр вырăнсенче кăна пырать, мĕншĕн тесен хулана тăтăшах тасатса пыма халь нимĕнле май та çук.

Швейцарире тухакан «Ла сюисс» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: гитлерла влаçсем темĕн пек хаяр мерăсем йышăннă пулин те, Берлин çыннисем хуларан тараççĕ. Хуларан ирĕк памасăр тухса каякан çынсене нимĕнле ĕç тупса та продуктсем те, карточкăсем те памаççĕ. Ноябрĕн 23-мĕшĕнче тапăннă хыççăн хулара темиçе сехет хушши нимĕнле йĕрке те пулман, темиçе сехетрен тин вара влаçсем çуртйĕрсĕр тăрса юлнă çынсене пуçтарма тытăннă, çавăн пек çынсен хисепĕ ытла та пысăк.

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Дагенс нюхетер» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Берлинра пурăнакан темиçе пин çын метро туннелĕсемпе çÿреççĕ, мĕншĕн тесен çуртсем çуннă тата ишĕлнĕ пирки урамсемпе çÿреме май çук. Берлинра газ та, электричество та, шыв та çук.

БАЛТИКА ÇУМĔНЧИ ÇĔРШЫВСЕНЧЕН АМЕРИКĂНА КУÇСА КАЙНĂ ÇЫНСЕН КУЛЬТУРĂЛЛĂ ОРГАНИЗАЦИЙĔСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔ ХЭЛЛ ПАТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Балтика çумĕнчи çĕршывсенчен Америкăна куçса кайнă çынсен культурăллă организацийĕсен конференцийĕ (унта 1500 членран делегатсем пулнă) США-н государственнăй секретарĕ Хэлл патне çыру янă. Çав çырура Бильманиса, Жадейкиса, Кайва, Прокопене Латви, Литва, Эстони тата Финлянди представителĕсем тесе йышăннине хирĕç çырнă.

Çырура çапла каланă: «США-ра посольствăсемпе миссисен ятне йышăнса тăракансем совета хирĕçле саракан пропаганда пирĕн халăхсемпе пĕрлешÿллĕ нацисен тĕп вăйĕсем хушшинче хирĕçÿ тата пĕр-пĕрне шанманлăх сарма тăрăшать. Балтика таврашĕнчи халăхсем пĕрлешÿллĕ нацисене хирĕç вăрçă туса пыракан фашизм йĕркине хирĕç кĕрешеççĕ». Малалла конференци делегачĕсем Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене Финляндие хирĕç вăрçă пуçласа яма сĕннĕ тата Хэллăн Мускаври конференцире тунă ĕçĕсене пысăк хак панă.

ГРЕНОБЛЬТИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИВĔЧЛЕНСЕ ПЫНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Гренобльте (Франция) сăтăрла ĕçсем тăвасси пĕрре те чарăнмасть. Нумаях пулмасть, бомбăсем пăрахса темиçе предприятие сиенленĕ, нимĕç салтакĕсене темиçе хутчен те хĕçпăшалпа тапăннă. Çавсем пирки оккупаци влаçĕсем çынсене çĕнĕрен хаяррăн тыткаласси пе хăратаççĕ.

Агентство çапла хушса хурать: Лондонра пурăнакан французсем илнĕ хыпарсем тăрăх, гитлеровецсем Тулонра 6 француз патриотне асаплантарса вĕлернĕ, вĕсене саботаж тунă тесе айăпланă.

Алжирти радио çапла пĕлтерет: Лион хули çывăхĕнчи Сент-Этьенре гитлеровецсем 5 француза асаплантарса вĕлернĕ.

ИТАЛИ ЫЙТĂВĔСЕМ ПИРКИ ТУНĂ КОНСУЛЬТАЦИ СОВЕТĔНЧЕ ĔÇЛЕМЕ МАССИГЛИЕ УЙĂРСА ЛАРТНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Алжиртан пĕлтернĕ тăрăх, Итали ыйтăвĕсем пирки тунă Консультаци совечĕн малтанхи сессийĕсенче Франци представителĕ пулса ĕçлеме Француз халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн ют çĕршыв ĕçĕсен комиссарне Массиглие уйăрса лартнă.

Ответлă редакторă заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Вăрман хатĕрлевĕнчи фронтовой уйăхлăх

Вунă кунхи ĕçсем

Вăрман хатĕрлевĕнчи фронтовой уйăхлăха республикăри чылай районсем активлăн хутшăнчĕç. Ишлей, Йĕпреç, Калинино тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи партипе совет организацийĕсем колхозниксемпе колхозницăсене фронтовой уйăхлăх задачисем çинчен тĕплĕн ăнлантарса парса, вăрманта ĕçлеме çынсем çителĕклĕ таран мобилизацилеме пултарчĕç. Вăл районсенчен пынă колхозниксем вăрманта та лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ.

Анчах та фронтовой уйăхлăх кирлĕ пек хăвăртлăхсемпе пырать теме çук-ха. Хăшпĕр районсем, уйрăмăнах, Хĕрлĕ Чутай, Элĕк, Çĕмĕрле, Тăвай, Сĕнтĕр районĕсем ĕç вăйĕ мобилизацилес тĕлĕшпе пит ех те сÿрĕк ĕçлеççĕ.

Çапла, Сĕнтĕр районĕнчен çуран тата лашапа 160 çын ĕçлес вырăнне 100 çын ытларах çеç ĕçлеççĕ. Чылай районсенчи партипе совет организацисем колхозсем ĕç вăйĕ мобилизацилес плана мĕнле пурнăçа кĕртнине тата вăрман хатĕрлевĕнче ĕçе мĕнле йĕркеленине тăтăшах тĕрĕслемеççĕ. Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе йĕркелеме те вăрман хатĕрлекен предприятисене тивĕçлипех пулăшмаççĕ. Çавна пулах ĕнтĕ чылай районсенчен пынă колхозниксем ĕç кунĕпе туллин усă курмаççĕ.

Фронтовой уйăхлăхăн малтанхи вунă кунĕ хушшинчи ĕçсем партипе совет организацийĕсене тата вăрман хатĕрлекен предприятисене ĕç хăвăртлăхне татăклăн ÿстерме хушаççĕ. Çакна тума пирĕн условисем пур. Тимлĕнрех хĕн ĕçлеме тытăнни кирлĕ.

Кашни колхоз „Марс“ колхоз пек ĕçлеме тивĕçлĕ

ЕЛЧĔК, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăрман хатĕрлевĕнче фронтовой уйăхлăх пуçлансанах «Марс» колхоз вăрманта ĕçлеме 20 çын уйăрса ячĕ. Вĕсене валли ĕç хатĕрĕсем кирлĕ таран тупса панă, столовăй организациленĕ. Лашапа ĕçлекенсене лаша пăхассинчен хăтарас шутпа уйрăм çын уйăрнă.

Районри кашни колхоз «Марс» колхоз пек ĕçлеме пултарать, тивĕçлĕ те. Анчах чылай колхозсем вăрман хатĕрлевĕнче пачах та çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Çавна пула ĕнтĕ район кая юлса пырать.

«Коммунист» колхоз (председателĕ Морозов) нумай пулмасть вăрманта ĕçлеме 16 çын уйăрса янă. Анчах вĕсене ĕç инструменчĕсем тупса паман. Çавăн пирки колхозниксем чылай вăхăт хушши ĕçлемесĕр пурăннă. Крупская ячĕпе тăракан колхоз та ĕç инструменчĕсем паман. «Осоавиахим» колхоз вăрманта ĕçлеме 9 çын уйăрса янăччĕ, вĕсем çул çинче 9 кун ирттернĕ. Вăрмана пырсан та кирлĕ пек ĕçлемен.

Вăрман хатĕрлевне хутшăнман колхозсем те пур

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). Районри колхозсенчен халĕ вăрман касса турттарнă çĕрте темиçе вунă колхозник ĕçлет. Вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе Туçи Çармăс ялсовечĕ тата «1-ое мая», «Звезда», «Молодой колхозник» колхозсем лайăх ĕçлеççĕ. Вăл колхозсенчен ĕç вăйĕ çителĕклĕ таранах уйăрса янă. Нумайĕшĕ паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Çапла, «Заря» колхоз членĕ Т. Николаев юлташ нормăна 180 процент таран тултарать. Ăна лайăх ĕçленĕшĕн преми те панă.

Вăрман хатĕрлес ĕçе пур колхозсем те хутшăнман-ха. «Новый путь», «Новая жизнь», «Комсомол» колхозсем ку таранах çитсе те çынсем уйăрса яман. Çав колхозсен председателĕсем вăхăт пур-ха, ĕлкĕрĕпĕр, — тесе лараççĕ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

ноябрĕн 29-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун саслă илемлĕ

«БОРЬБА ЗА СОВЕТСКУЮ УКРАИНУ»

ятлă çĕвĕ фильм кăтартать

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 18, 20 тата 22 сехетре.

Касса кăнтăрла 12 сехетрен пуçласа ĕçлеме тытăнать.

Коллективпа пырса курма паракан заявкăсене кашни кунах ирхине 9 сехетрен пуçласа 12 сехетчен илеççĕ.

Часах

„КОМСОМОЛЬЦЫ“

ятлă фильм кăтартма пуçлаççĕ

ТРАНСПОРТПА ЭКСПЕДИЦИ КОНТОРИ пур автохуçалăхсемпе клиентсене те Контора çĕнĕ вырăна куçни çинчен пĕлтерет. Контора адресĕ халь çапла: Чебоксары, Союзная ул., д. 4.

ПРИВО ВОЕНТОРГĔН Шупашкарти отделенине çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: производство отделĕн старши бухгалтерĕ, çар столовăйĕсен отделĕн главнăй бухгалтерĕ, бухгалтер-ревизор.

Адрес çапла: Чебоксары, ул. Ленина, 2, Военторг, Отдел кадров. Телефон 1—91.

Шупашкарти арман комбинатне старши бухгалтер кирлĕ.

Условисем çинчен çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 15. Чувашкельтрест. 2—1.

1944 ÇУЛШĂН

„ЧĂВАШ КОММУНИ“

тата

„КРАСНАЯ ЧУВАШИЯ“

хаçатсене çырăнса илĕр.

Чăваш АССР районĕсенче тухса тăракан хаçатсене пурне те

ÇЫРĂНСА ИЛĔР.

Асăннă хаçатсене пурне те хуласенчи тата ялсенчи пур почта отделенийĕсенче, сыхăну агентствисенче тата пур почтальонсем патĕнче те çырăнса илме пулать.

СОЮЗПЕЧАТЬ.

Чăваш АССР-ĕнчи адвокатсен коллегийĕн президиумĕ çар çыннисен çемьисен членĕсене тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене çакăн çинчен пĕлтерет: çурт-йĕр, пенси, налог тĕлĕшпе тата граждански е трудовой ĕçсем тăрăх квалификациллĕ адвокатсем юридически пулăшу параççĕ. Канмалли кунсемсĕр пуçне кашни кунах 9 сехетрен пуçласа 17 сехете çитиччен пыма юрать.

Адрес çапла: гор. Чебоксары, Красная площадь, 2, Чебоксарская Юрконсультация.

Районсенче çав пулăшăва халăх сучĕсем çумĕнчи консультацисенче параççĕ. 2—1.

Чăвашмедснаба плановик-экономист тата секретарь-машинистка васкавлă кирлĕ.

Адрес çапла: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 7, Чувашмедснаб. 2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 1885 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л Тираж 14.400 экз.